Чăваш Республикинчи Шупашкар хулинчи
пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 53-мĕш шкул

# «Чăваш çĕрĕ – Улăп çĕрĕ»

уяв сценарийĕ

Хатĕрлекенсем:
кĕçĕн классене вĕрентекен
Иванова Ирина Александровна,
Семенова Ирина Витальевна

Шупашкар, 2016

**Тĕллевĕ:** Ачасене чăваш халăх историйĕпе, «Уяв» йăли-йĕркипе кĕскен паллаштарасси.

**Задачисем:**

1.Чăваш халăх культурине, чĕлхине упрамалли çинчен калаçасси.

2. Ачасен чăваш чĕлхине вĕренес туртăмне ӳстересси.

3. Чăваш халăх юррисемпе тата сăвăсемпе усă курса ачасен сăмах йышне ӳстересси, çыхăнуллă пуплевне аталантарасси.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:**
компьютер, проектор, презентации, ачасем вали çĕленĕ чăваш кĕписем.

**Умĕнхи ĕç:** ачасемпе чăваш халăх юррисене, сăввисене вĕренесси.

**Литература:**
1.Воронцов Г.И., Воронцова В.И. Ачасемпе çамрăксен вăййисем.-Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.2002.
2.Иванов Г.Г. Ача-пăча сăмахлăхĕ: хушма вулав кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.1996.
3.Кудаков Ю.Д., Кузнецова Л.В. Чăваш музыки 1-4 классенче. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.2001.
4.Трофимов Г.Ф., Петрова Р.Н. Ача-пăча сăмахлăхĕ: хрестоматии. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.1993.
5.Хусанкай П.П. Эпир пулнă, пур, пулатпăр! Сăвăсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.1982.
6.Юхма М. Песнь о Чувашии. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.1995.

**Уяв сценарийĕ**

| | |
|---|---|
| 1 слайд | <u>1-мĕш ача:</u><br>Знаете ли вы страну такую<br>Древнюю и вечно молодую,<br>Где в лесах тетерева токуют-<br>Словно песней сердце околдуют.<br>Где коль праздник – от души ликуют,<br>Коль работа – гору дай любую!<br><br>Çак çĕре эсир пĕлетĕр–и:<br>Ватă та вăл; ĕмĕр çамрăк та.<br>Ăсан туйĕ хӳхĕм çав тери –<br>Курсан чун киленĕ вăрманта.<br>Уявра уяв ку çĕр-шывра,<br>Ĕçĕпе – хускатĕ вăл тăва!<br><br><u>2-мĕш ача:</u><br>Знаете ли Вы такой народ,<br>У которого сто тысяч слов,<br>У которого сто тысяч песен<br>И сто тысяч вышивок цветет?<br>Приезжайте к нам — и я готов<br>Это все проверить с вами вместе.<br><br>Кам-ха, кам çак халăха пĕлет:<br>Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет.<br>Çĕр пин юрă–çемĕ кĕвĕлет,<br>Çĕр пин тĕслĕ тĕрĕ вăл тĕрлет…<br>Пырса курăр — йăлт сирĕнпеле<br>Хатĕр эп тĕрĕслеме пĕрле.<br><br>( «Йыхрав» П.Хусанкай) |
| 2 слайд | <u>3-мĕш ача</u>: Чăваш çĕрĕ – Улăп çĕрĕ. Улăп- юмахсенче тĕл пулакан çав тери вăйлă, ырă, ĕçчен паттăр. |
| 3 слайд видо-фильм | <u>4-мĕш ача:</u> Тахçан, ĕлĕк-авал Улăп ывăлĕсене хăй патне чĕннĕ те кăнтăртан çурçĕр еннелле куçса аслă юхан шыв хĕрне çитсе вырнаçма хушнă. Çак çĕре ĕмĕртен ĕмĕре ывăлĕсен те, вĕсен ачисен те хисеплемелле тенĕ. Унта ырă вăрлăх акма хушнă. |
| 4 слайд | <u>5-мĕш ача</u>: Пиччĕшпе шăллĕ çапла тунă та. Пĕри Атăлăн сулахай енне, тепри сылтăм енне килсе вырнаçнă. Кунта вĕсем çĕр сухаласа тырă акнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, ача-пăча ӳстернĕ. |
| 5 | <u>3-мĕш ача</u>: Авалтан эпир юратнă |

| | |
|---|---|
| слайд | Пархатарлă Атăла,<br>Ун шывне нумай хумхатнă<br>Тăвалла-анаталла.<br>Пирĕн халăх ĕмĕтленнĕ<br>Кун курасшăн малашне.<br>Сĕм вăрман пире пилленĕ<br>Сиплĕ  уçă сывлăшне.<br>4-мĕш ача:<br>Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртрĕ,<br>Шухăш вĕçрĕ аякка.<br>Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ:<br>Пирĕн çул-йĕр сарлака.<br>Пурăнах эс ĕмĕр сывă<br>Халăхсен кил-йышĕнче,<br>Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ,<br>Аслă Атăл хĕрринче!<br><br>( «Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ» П.Хусанкай) |
| 6 -8 слайд сем | 6-мĕш ача: Чăваш çĕр-шывĕнче питĕ ĕçчен çынсем пурăнаççĕ. Вĕсем хушшинче тĕрĕçĕсем, ал ĕç ăстисем нумай. Чăваш пикисем хăйсен тумтирне илемлĕ тĕрĕсемпе капăрлатнă. |
| 9 слайд | 7-мĕш ача:Чăвашсем ĕçре кăна мар,  юрă-ташăра та ăста. Тăрăшса ĕçленĕ хыççăн юрласа та ташласа чуна савăнтарма пĕлеççĕ. |
| 10 слайд | 1-мĕш ача: Паян эпир сире чăваш «Уявĕн» пĕр пайĕпе паллаштаратпăр. |
| 11 слайд | (Ачасем сцена çине «Çĕмĕрт çеçки çурăлать» юрăпа тухаççĕ.)<br>1.Çĕмĕрт çеçки çурăлать те,<br>Çĕмĕрт çеçки çурăлать.<br>Вăрман витĕр курăнать.(2х.)<br><br>2.Шурă кĕпе тăхăнсан та,<br>Шурă кĕпе тăхăнсан.<br>Вăйă витĕр курăнать.(2х.)<br><br>3.Эпир вăййа тухсассăн та,<br>Эпир вăййа тухсассăн.<br>Юрлани те илĕшет.(2х.) |
| 12 слайд | 3-мĕш ача:<br>Çамрăк тус, пуçна ан ус,<br>Вăйна пух.<br>Пирĕнпе, çамрăк тус,<br>Вăййа тух!<br><br>(Ачасем «Сар ача» юрра юрлаççĕ.)<br>1.-Сар ача, сар ача, |

| | |
|---|---|
| | Тух-ха урама!<br>-Мĕн тума? Мĕн тума?<br>-Вăйă вылямя!<br><br>2.-Сар ача, сар ача,<br>Тух-ха урама!<br>-Мĕн тума? Мĕн тума?<br>-Юрă юрлама!<br><br>3.-Сар ача, сар ача,<br>Тух-ха урама!<br>-Мĕн тума? Мĕн тума?<br>-Ташă ташлама!<br><br>4.-Сар ача, сар ача,<br>Тух-ха урама!<br>-Мĕн тума? Мĕн тума?<br>-Сăвă калама!<br><br>4-мĕш ача: –Ачасем, айтăр вăйă вылятпăр.<br>Ачасем:-Мĕнле вăйă?<br>4-мĕш ача: -Çĕрĕ валеçмелле.<br>(Ачасем çĕрĕ валеçмелле выляççĕ. Çĕрĕ камрине пĕлеймен хĕр ача «Пукане» юрă юрлать.)<br><br>**Пукане.**<br>1.Пухăнсассăн тантăшсем пĕрле<br>Чысламашкăн ман менельнике.<br>Асатте, асанне, аттепе анне<br>Асăнмалăх парнелерĕç мана пукане.<br>*Хушса юрламалли:*<br>Пукане, пукане, пукане,<br>Манăн çывăх юлташ пукане.<br>Асаттепе асанне тата аттепе анне<br>Асăнмалăх парнелерĕç мана пукане.<br><br>2.Кăвак куçлă манăн пукане,<br>Сарă çӳçлĕ манăн пукане.<br>Асатте, асанне, аттепе анне<br>Чи илемлĕ ят шыраççĕ ман пуканене.<br>*Хушса юрламалли:*<br>Салампи, Илемпи, Пинерпи,<br>Ларине, Сарине, Урине.<br>Асаттепе асанне тата аттепе анне<br>Чи илемлĕ ят шыраççĕ ман пуканене. |

| | |
|---|---|
| | 3.Питӗ лайăх манăн пукане,<br>Халӗ унăн ячӗ Кулине.<br>Асатте, асане, аттепе анне<br>Уçăлма пӗрле çӳретпӗр ман пуканепе.<br>*Хушса юрламалли:*<br>Пукане, пукане, пукане,<br>Пирӗн çывăх юлташ Кулине.<br>Асаттепе асанне тата аттепе анне<br>Юрататпăр эпир пурте ман пуканене. |
| 13 слайд | <u>5-мӗш ача:</u>-Ачасем, айтăр татах выляр!<br><u>Ачасем: </u>-Выляс, выляс!<br>(Ачасем «Çӗрӗ валеçмелле» малалла выляççӗ. Çӗррине тупайман ача ташă ташлать. Ытти ачисем «Ванюк тух-ха» юрра юрлаççӗ.)<br><br>**Ванюк тух-ха.**<br>1.Тух-ха, Ванюк, пирӗн ума,<br>Эсӗ ташша пит ăста.<br>Кăвва-кăвва, кăвва-кăвва,<br>Кăвва-кăвва, тут-тут!<br><br>2.Ташласа пар, савăнтар.<br>Эпир алă çупăпăр.<br>Кăвва-кăвва, кăвва-кăвва,<br>Кăвва-кăвва, тут-тут!<br><br>3.Ӗнтӗ Ванюк хыççăн эпир<br>Пурте алă çупăпăр.<br>Кăвва-кăвва, кăвва-кăвва,<br>Кăвва-кăвва, тут-тут!<br><br><u>6-мӗш ача:</u>-Татах выляр-и?<br><u>Ачасем:</u>-Выляр, выляр!<br>(Ачасем «Çӗрӗ валеçмелле» малалла выляççӗ. Çӗррине тупайман ача сăвă калать.)<br><br>Чăваш сăмахӗ – пирӗн чăн çăл куçӗ,<br>Шăнкăртатать вăл ӗмӗр-ӗмӗре.<br>Унпа кăна поэт çул уçӗ,<br>Унпа кăна вăл чӗрӗ тӗнчере.<br>П.Хусанкай |
| 14 слайд | <u>7-мӗш ача:</u> - Ачасем, тепӗр вăйă выляр-и?<br><u>Ачасем:</u>-Выляр, выляр!<br>**Миша, теп…**<br>-Миша, теп,Миша, теп, илтетни? |

-Илтетĕп.
-Эс ăçта, эс ăçта, эс ăçта?
-Пахчара.
-Вăййа тух, вăййа тух, вăййа тух.
-Мĕн тума?
-Савăнса, савăнса выляма.
- Тухатăп.

(Ачасем чăваш халăх вăййисене выляççĕ.)
**«Автансем».**
Икĕ ача вылять. 2 метр радиуспа çĕр çине ункă тăваççĕ.
Вылякансем çак ункăна тăраççĕ. Вĕсен хăрах ура çине тăрса хулпуççисемпе (аласене хыçалалла тытнă) пĕр-пĕрне тĕккелесе çак ункăран кăларса ямалла. Хăшĕ малтан кăларса ярать, çавă çĕнтерет.
**«Тăрналла».**
Вăйă пуçланиччен ачасем çаврака йĕр туртса хатĕрлеççĕ. Вылякансен йышĕ тĕрлĕрен пулма пултарать. Туртнă йĕр тăрăх хăрах ура çинче пĕр-пĕрин хыççăн сиксе пымалла. Йĕртен аякалла пăрăнма юрамасть. Çаврашка варринче – судья. Вăл ывăнаканнисене, çаврашкаран аякалла пăрăннисене вăйăран кăларать. Чăтăмли, чи кая юлса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçекенни судья пулса тăрать.

4-мĕш ача: - Ачасем, сирĕнпе эпир вылярăмăр, ташларăмăр, юрларăмăр, сăвăсем каларăмăр. Киле кайма та вăхăт пуль.
Ачасем: - Каяс, каяс. Тепĕр юрă юрлар-ха малтан.
(Ачасем сцена çинчан «Улми лайăх-и» юрăпа каяççĕ.)
**Улми лайăх-и?**
1.Улми лайăх-и?
Çеçки лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан çеçки лайăх,
Улми тата лайăхрах.

2.Тулли лайăх-и?
Ырашĕ лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан ырашĕ лайăх,
Тулли тата лайăхрах.

3. Юрри лайăх-и?
Ташши лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан ташши лайăх,
Юрри тата лайăхрах.

2-мĕш ача: - Авалхи ташă-кĕвĕ ан пĕттĕр,
Тăван çĕрĕн юрри
Ĕмĕр чĕрĕлĕх шывĕ пулса

| | |
|---|---|
| | Çын ăшне те юнне<br>Сиплĕн, çулăмлăн кĕтĕр тапса!<br><br><br>1-мĕш ача:<br>«Мĕн чăваш чĕлхи!» — илтетпĕр<br>Хăш чухне чăвашранах.<br>Йĕрĕнсе пăхса илетпĕр<br>Ун йышши каçрашкана.<br>Кĕççе пит вăл, кĕлмĕç чун.<br>Куçăнах унран кулатпăр:<br>Ӳк те çурăл, хып та çун —<br>Эпир пулнă, пур, пулатпăр!<br>3-мĕш ача:<br>«Бедноват язык наш»,— бросит,<br>Сморщив нос, иной чуваш.<br>Пусть презренье наше сносит<br>Верхогляд за эту блажь.<br>Жалок нищий дух таких.<br>Что ж тогда волнует грудь им?<br>Пусть сердца прожжет им стих:<br>Были мы, и есть, и будем! |
| 15 слайд | 3-мĕш ача: Çитменнине çитерĕр, ытлашшине каçарăр.<br>Сывă пулăр! |